25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ИЮНЬ
4
КĔҪНЕРНИКУН
128(6063) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Осоавиахим членӗсен лайӑх пуҫарӑвӗ

Пирӗн халӑх хӑйӗн паттӑр ҫарне юратать, уншӑн хытӑ тӑрӑшать. Пирӗн ҫар совет ҫӗршывӗнчи пур тӗрлӗ национальноҫсен миллионлӑ массисенчен пысӑк пулӑшу илсе тӑрать.

Рабочисемпе хресченсем, интеллигентсем Хӗрлӗ Ҫар валли ытларах та ытларах хӗҫпӑшал, тумтир, апат-ҫимӗҫ парас, заводсемпе фабрикӑсене тӗртавар парас тӗлӗшпе пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Пирӗн ҫулпуҫӑн, аслӑ полководец Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗпе хавхаланнӑ совет патриочӗсем фронтра та тылра та нимӗҫсен фашистла войскисене пӗтӗмпех аркатса тӑкас задачӑна пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем, командирӗсем, политработникӗсем отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче Гитлерӑн вӑрӑ-хурахла ҫарӗсене хирӗҫ геройла ҫапӑҫаҫҫӗ, тӑшмана хӗвеланӑҫнелле хӑвалаҫҫӗ. Пирӗн заводсемпе фабрикӑсенче, колхозсемпе совхозсен уй-хирӗсенче хӗрӳ ӗҫ пырать. Кашни совет ҫынни пӗр ӗмӗтпе, пӗр тӗллевпе — нимӗҫ ирсӗрӗсене хӑвӑртрах аркатса тӑкас шухӑшпа пурӑнать.

Отечественнӑй вӑрҫӑра хӑюллӑн та паттӑррӑн, хӑйсен пурнӑҫӗсене шеллемесӗр ҫапӑҫакан геройсене тылри геройсем хастарлӑн ӗҫлесе пулӑшаҫҫӗ.

Пӗтӗм Совет халӑхӗпе пӗрле пирӗн Чӑваш республикин ӗҫҫыннийӗсем те фронта пур енчен те пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Фронтшӑн тӑрӑшнине палӑртса тӑракан ӗҫсенчен пӗри — ҫӗршыв оборонин фондне укҫа-тенкӗ, тырпул, хаклӑ япаласем пани пулса тӑрать. Июнӗн 1-мӗш тӗлне республикӑри ӗҫҫыннисем пӗтӗмпе оборона фондне 10.546 пин тенкӗ укҫа, 438 тонна тӗштырӑ, 490 центнер аш-какай, 823 гектолитр сӗт, 2.273 килограмм ҫу, 14 тонна пахча-ҫимӗҫ панӑ. Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе ҫамрӑксем пуҫарнипе «Комсомол Чувашии» бронепоезд тума укҫа-тенкӗ пухрӑмӑр. Ӗҫҫыннисен анлӑ массисем бронепоезд валли пӗтӗмпе 1.300 пин тенкӗ ытла укҫа хыврӗҫ. Етӗрнери пионерсен пуҫарӑвӗпе «Пионер Чувашии» танк валли укҫа-тенкӗ пухма тытӑннӑ. Ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтирсемпе япаласем пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ, фронтри боецсем валли парнесем ярса тӑраҫҫӗ.

Нимӗҫ мерзавецӗсене хирӗҫ Действующи армире паттӑррӑн ҫапӑҫакан совет боецӗсем, командирӗсем тата политработникӗсем пире фронта пулӑшас тӗлӗшпе тата хастартарах ӗҫлеме чӗнеҫҫӗ. Паян эпир ВКП(б) Чӑваш Обкомне фронтран килнӗ телеграммӑна пичетлетпӗр. Ҫак телеграмма пире ҫакна тума чӗнет: нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫӗнтерме Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлине йӑлтах ҫителӗклӗ парса тӑрассишӗн пирӗн ырми-канми ӗҫлемелле.

Паянхи хаҫатра эпир Ишлей районӗн центрӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑк хӗрарӑмсен подразделенинчи осоавиахимовецсен чӗнӗвне пичетлетпӗр. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫар валли самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тӑвас ӗҫе пуҫарчӗҫ. Вӗсем хӑйсем хушшинче 5 пин тенкӗ ытла пухса самолетсен звенине тума панӑ. Вӗсен чӗнӗвӗнче эпир ҫакна вулатпӑр: «Чӑваш республикинчи осоавиахимовецсем! Эпир сире пирӗн пек тума чӗнетпӗр. Пирӗн звено нимӗҫ мерзавецӗсене ним шеллемесӗр вӑйлӑн аркатса пытӑр».

Ҫак пуҫарӑва ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ ырларӗ. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе анлӑн сарас пулать. Ку ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулса иртесси парти, комсомол тата осоавиахим организацийӗсем Ишлей районӗнчи осоавиахимовецсен чӗнӗвне республикӑри ӗҫҫыннисем патне хӑвӑртрах ҫитерме пултарнинчен, ҫак ӗҫе организацилесе пынинчен килет. Ҫак чӗнӗве осоавиахимӑн кашни членӗ патне, кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент патне ҫитермелле.

ВКП(б) райкомӗсемпе пуҫламӑш парторганизацисен, агитколлективсен, кашни агитаторӑн «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звено тӑвасси ҫинчен ӗҫҫыннисене ӑнлантарса парас ӗҫе ҫине тӑрса туса пымалла. Самолетсен звенине тума укҫа-тенкӗ пухас ӗҫре коммунистсен, комсомолецсен, активистсен, осоавиахим членӗсен хӑйсен пример кӑтартас пулать.

Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тӑвас ӗҫе республикӑри мӗнпур ӗҫҫыннисен хутшӑнмалла. Тӑван ҫӗршыва юратакан кашни ӗҫҫынни хӑйӗн перекетленӗ укҫине парса самолетсен звенине тӑвас ӗҫе пулӑшмалла.

Халӗ, тӑван ҫӗршыв умӗнче пысӑк задача тӑнӑ вӑхӑтра, ирсӗр тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑватне пур енчен те ҫирӗплетсе пымалла. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума укҫа-тенкӗ пани Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн тӑрӑшни, Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне пурнӑҫа кӗртес тесе практикӑллӑ ӗҫ туни пулать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 2-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 2-мӗшӗнче фронтра паллӑ ӗҫсемех пулман. Фронтӑн хӑшпӗр участокӗсенче вырӑнти ҫапӑҫусем пулса иртнӗ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

* * *

Июнӗн 1-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 11 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, горючи тултарнӑ пӗр автоцистернине, боеприпассем тиенӗ 195 лавне, 16 полевой тата зенитнӑй орудине, 12 пулеметне, 3 прожекторне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, хуралта ҫӳрекен 2 карапа пӗр транспорта сиенленӗ, противникӑн пехотине 5 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть пирӗн войскӑсем тӑракан вырӑна саваллланса кӗме хӑтланнӑ противникӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 270 ҫынна вӗлернӗ. Артиллери тӑшманӑн темиҫе танкне, минометсен батарейине тата 7 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Брянск фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн боецсем нимӗҫсен 8 дзотне ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. 8 миномет, 5 станковӑй пулемет, пӗр оруди тата радиостанци тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен 150 вилли ытла выртса юлнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Кравцовпа Курманов минометчиксем темиҫе хут персе 4 огневой точкӑна пӗтерсе лартнӑ тата 25 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Калинин облаҫӗнчи партизансен Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрядне нимӗҫсен чылай йышлӑрах вӑйӗсем ҫавӑрса илнӗ. Отряд темиҫе сехет хушшиункӑ ӑшӗнче ҫапӑҫнӑ. Каҫ пулса ҫитсен, партизансем гитлеровецсене сасартӑк атакӑланӑ та, тӑшманӑн ункине татса, ҫавӑрса илнӗ вырӑнтан тухнӑ. Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен 100 салтакпа офицертан кая мар вилнӗ. Партизансен ҫав отрячӗ темиҫе кунтан нимӗҫсен автоколонни ҫине пырса тапӑннӑ, 7 грузовик ҫунтарса янӑ тата 30 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Карели фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн боецсем противника вӑл йышӑнса тӑракан позицирен ҫапса кӑларнӑ. Тӑшманӑн блиндажӗсем умӗнче Ф. А. Деницевич красноармеецӑн виллине тупнӑ. Унччен темиҫе кун маларах Деницевич ҫапӑҫура аманнӑ пулнӑ, противниках ӑна тыткӑна илнӗ. Аманнӑ красноармееца белофинсем тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ, унӑн хӑлхисене касса татнӑ, питҫӑмартине темиҫе ҫӗртен касса илнӗ, ҫӗҫӗпе вуншар тӗлтен чиксе суранласа пӗтернӗ.

* * *

Гитлеровецсем хӑйсем оккупациленӗ ҫӗршывсенчи халӑхсене татах тискеррӗн асаплантарма хатӗрленеҫҫӗ. Ун ҫинчен ҫак кунсенче Чехипе Моравин протекторӗ пулма лартнӑ ирсӗр палач Далюге уҫҫӑнах каласа пӗлтернӗ. Германин информаци бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Далюге ҫапла каланӑ: «Хальхи аслӑ ҫапӑҫура кам та кам нихӑш енне те хутшӑнмасӑр аякран кӑна пӑхса тӑрса ирттерсе яма шутлать, ӑна эпир противник вырӑнне хуратпӑр, ҫавӑнпа та ӑна противника пӗтернӗ пекех пӗтеретпӗр. Пирӗн ҫак принцип уйрӑм ҫынсене те, уйрӑм халӑхсене те пӗтӗмӗшпех пырса тивет... Кам та кам ҫак татӑклӑ ҫапӑҫу ҫине мӗн пуласса кӗтсе кӑна пӑхса тӑрать, вӑл пирӗн тӑшман, вӗсене эпир тӑшмана тыткаланӑ пек тыткалӑпӑр».

Гитлерла мерзавецсем хӑйсем чуралантарнӑ пур халӑхсене те пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкассипе хӑратаҫҫӗ. Анчах та фашистла бандитсен шайки ирӗклӗхе юратакан халӑхсене пӗтерсе тӑкма пултараймӗ. Вӑл халӑхсен нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ тӑрас кӑмӑлӗ, оккупантсене парӑнманлӑхӗ кунсерен вӑйланса ҫирӗпленсе пырать. Чехословакири, Голландири, Францири тата ытти ҫӗршывсенчи халӑхсене массӑллӑн асаплантарса вӗлерни гитлерла режим хӑйӗн пӗтсе ларас вӑхӑчӗ умне ҫывӑхах ҫитсе тӑнине татах тепӗр хут кӑтартса парать.

Июнӗн 3-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 3-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть икӗ кун хушшинче нимӗҫсен пехотин темиҫе атакине сирсе пӑрахнӑ. Ҫапӑҫура нимӗҫсен 3 танкне тата пӗр броневикне ҫунтарса янӑ, 4 орудине, 6 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. Пирӗн боецсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: снарядсем тиенӗ 5 автомашина, 8 мотоцикл, 3 пулемет, 5 миномет тата 20.000 патрон. Нимӗҫсен 650 салтакӗпе офицерӗ вилнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен чаҫӑн артиллерисчӗсем нимӗҫсен артиллерин 9 батарейине тата уйрӑмӑн 10 орудине, боеприпассен складне тата 300 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сазонов юлташ командир пулса тӑракан чаҫӑн артиллерисчӗсем 20 блиндажа ҫӗмӗрнӗ тата унта пулнӑ 150 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Чамуркин юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен групп нимӗҫ автоматчикӗсен отрячӗ ҫине засадӑран пенӗ. 9 гитлеровеца вӗлернӗ, 12 ҫынна амантнӑ.

* * *

Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ, Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, чугунҫулӑн пӗр участокӗ ҫине минӑсем хурса тухнӑ. Румын салтакӗсене фронта илсе каякан эшелон ҫав минӑсем ҫине пулса сирпӗнсе кайнӑ. 9 вагон тата паровоз ҫӗмӗрӗлнӗ. Партизансем вагонсенчен сике-сике тухакан румынсем ҫине пулеметсенчен тата автоматсенчен пенӗ. Поезд ҫӗмӗрӗлсе кайнипе тата партизансем пенипе румынсен 300 салтакӗпе офицерӗ ытла пӗтнӗ.

* * *

Аяларахра нимӗҫсен фронтра вилнӗ унтер-офицерӗн Густав Марквортӑн записной кӗнекинчен уйрӑм вырӑнсене илсе пичетлетпӗр:

«Вырӑссем тапӑнчӗҫ. Пысӑк сухатусем тӳсетпӗр. Ялтан тухса каяс умӗн эпир ӑна ним юлмиччен ҫунтарса ятӑмӑр тата вӑл ялти ҫынсене—хӗрарӑмсем-и вӗсем, ачасем-и—пурне те персе вӗлертӗмӗр...

Вырӑссен салтакӗсемпе партизанӗсене хирӗҫ кунӗн-ҫӗрӗн кӗрешетпӗр. Эпир ыйхӑ та, канӑҫ та курмастпӑр. Рота командирне амантнӑ, взводсемпе отделенисен командирӗсенчен нумайӗшне вӗлернӗ е амантнӑ. Ҫӗрле манӑн пӗр паха пунктран тухса кайма тиврӗ, мӗншӗн тесен манӑн отделенири ҫынсем вырӑссем хӗснине тӳссе тӑраймарӗҫ, тарса сапаланчӗҫ... Вырӑссен танкӗсем ҫӗмӗрсе кӗчӗҫ те, пирӗн вара ирӗксӗрех артиллерирен тата пулеметсенчен вӑйлӑн персе тӑнӑ вӑхӑтра каялла чакмалла пулчӗ. Эпӗ хамӑн мӗнпур ҫынсене сухатрӑм. Кӑнтӑрла патрульре ҫӳренӗ вӑхӑтра ротӑн хальхи командирне штабс-фельдфебеле Грюперта амантнӑ. Ватӑ хаупт-фельдфебель Гельмбрехт командование хӑй ҫине илчӗ, анчах вӑраха мар. Ҫур сехетрен ӑна та вӗлерчӗҫ..

Шухӑш-кӑмӑлсем питӗ те пусӑрӑнчӑк. Ҫӗрле каллех нумай жертвӑсем пулчӗҫ... Малти позицири постсене улӑштарнӑ вӑхӑтра пирӗнне 50 ҫынна вӗлернӗ, 2 танка стройран кӑларнӑ. Гэнӑна пуҫӗнчен лектерсе вӗлерчӗҫ. Нумай салтаксем чарӑнма пӗлмесӗр макӑрчӗҫ,—вӑйсем пӗтсе ҫитрӗҫ иккен ӗнтӗ. Йывӑр аманнӑ салтаксемпе чирлисем куллен вуншарӑн вилеҫҫӗ. Нервӑсем вӗсне ҫитиех ҫивӗчленсе ҫитнӗ ӗнтӗ. Дивизин ҫухатӑвӗсем ҫакӑн пек: пӗр пин ҫын вилнӗ, 1.400 ҫын аманнӑ. Пирӗн вӑйсем пӗтсе пыраҫҫӗ. Полксемпе батальонсем кулленех иксӗлсе пыраҫҫӗ. Пирӗн батальонра мӗнпурӗ те 16 ҫын ҫеҫ юлчӗ. Эпир калама ҫук пысӑк хуйха ӳкрӗмӗр. Хӑҫан та пулин пӗтӗши ку?».

* * *

Харьков облаҫӗнчи Кивӗ Таволжанко ялӗнче нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем мӗнпур ҫынсене ҫаратса тухнӑ, вӗсен апат-ҫимӗҫсене, выльӑх-чӗрлӗхе, тумтире тата атӑ-пушмака пӗтӗмпе туртса илнӗ. Гитлерла бандитсем В. П. Бондаренева асаплантарса вӗлернӗ, К. В. Верещагина, А. М. Зубасова, В. П. Польщикова тата ялти ытти ҫынсене нумайӗшне персе вӗлернӗ. Нимӗҫ снайперӗсем лайӑхрах пеме вӗренес тесе вӗсен куҫне малтан курӑннӑ мирлӗ граждансене пурне те пере-пере вӗлернӗ.

* * *

Франци патриочӗсем май уйӑхӗ вӗҫӗнче нимӗҫсен Азебрук хулинчен инҫе мар вырӑнти боеприпассемпе тӗрлӗ хӗҫпӑшалсен склачӗсене тапӑннӑ. Вӗсем хуралта тӑракансене вӗлерсе пӗтернӗ те боеприпассене сирпӗнтерсе янӑ. Нумай хӗҫпӑшал туртарса кайнӑ. Гитлеровецсем ҫав ӗҫре пулнӑ патриотсене никама та шыраса тупайман.

Нимӗҫсем пысӑк ҫухату тӳсеҫҫӗ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июнӗн 2-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Халӑх пурӑнакан пӗр паллӑ пункт районӗнче темиҫе кун хушши ӗнтӗ хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пирӗн ҫар чаҫӗсем малалла куҫса, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Фашистсем хӑйсен ҫухатнӑ позицийӗсене кирек мӗн пулсан та каялла тавӑрасшӑн пулнӑ. Халӑх пурӑнакан пунктӑн ҫурҫӗр пайӗнче вӗсем ултӑ хутчен хаяр атакӑсем тунӑ. Анчах пӗр атаки те ӑнӑҫлӑ пулман. Икӗ кун хушшинче нимӗҫсен кунта пин ытла салтакӗпе офицерӗ вилсе выртнӑ.

Халӑх пурӑнакан пункт тӗлӗнче пулса иртнӗ хӗрӳллӗ ҫапӑҫура нимӗҫсен икӗ самолетне персе ӳкернӗ.

Тепӗр тӗлте, фронтӑн ансӑр участокӗнче, нимӗҫсем пехотӑн икӗ полкне тата 12 танка атакӑна кӗртсе янӑ. Артиллерирен персе хатӗрленнӗ хыҫҫӑн, авиаци хӳтӗлесе пынипе, нимӗҫсем пирӗн позицисем ҫинелле наступлени тума тытӑннӑ. Хаяр ҫапӑҫу тапранса кайнӑ. 8 сехете пынӑ ҫапӑҫура фашистсен 850 ҫынни вилнӗ.

Фронтӑн пӗр участокӗнче тӑшманӑн пехотипе партизансен отрячӗ хушшинче ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Партизансем тӑракан яла тытса илес тесе, гитлеровецсем унта пӗр полк пехота янӑ. Тӑшманӑн йышӗ пысӑк пулнӑ, ҫапах та вӑл партизансен ҫирӗплӗхӗпе паттӑрлӑхне ҫӗмӗрме пултарайман.

140 ҫын таран ҫухатнӑ хыҫҫӑн фашистсем каялла ҫаврӑнса кайнӑ.

Фронтӑн ҫӳлте асӑннӑ виҫӗ участокӗнче кӑна совет войскисем икӗ пин фашиста ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ҪАРАТУ ҪАРӖН ЙӖРРИПЕ

КАНТАР-ХЕВЕЛАНАҪ ФРОНЧЕ. Харьков енчи халӑх пурӑнакан пунктсенче, нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑскерсенче, фашистла варварсем мирлӗ халӑха ҫавтери хытӑ асаплантарнине кӑтартакан ҫӗнӗ фактсем тупӑна-тупӑна пыраҫҫӗ. В. ялта фашистсем тӑватӑ уйӑх хушши хаяррӑн хуҫаланса пурӑннӑ. Ялӑн сарлака урамӗсем халь пуш-пушах. Ҫунса пӗтнӗ ҫуртсен ишӗлчӗкӗсем мӑкӑрланса выртаҫҫӗ. Кунта фашистсем ҫӗршер ҫынна асаплантарса вӗлернӗ. Асаплантарса вӗлернисем хушшинче — 75 ҫулти колхозница Ирина Чернух, 15 ҫулти Иван Семенихин.

Западенька ялӗнче мӗнпурӗ те 25 килӗ кӑна пулнӑ. Ҫав пӗчӗк ялта та фашистсем 27 ҫынна—хӗрарӑмсене, ачасене тата стариксене—асаплантарса вӗлернӗ. Урамсенче 300 виле икӗ уйӑх ытла выртнӑ, вӗсене пытарма ирӗк паман. Нимӗҫсем апрель уйӑхӗнче С. хресчене хӑйсен ҫӗрулмине шӑтӑкран нимӗҫсем ирӗк памасӑр кӑларнӑшӑн ҫакса вӗлернӗ. Пӗр колхозницӑна кӑкӑр ӗмекен ачипе пӗрле шартлама сивӗре урама хӑваласа кӑларса янӑ. Ҫав ача вара амӑшӗн аллинчех вилнӗ.

Хӑйсем оккупациленӗ районсенче нимӗҫ захватчикӗсем крепосла йӗркесем туса хураҫҫӗ. Фашистсем кашни плуга 10—12-шер ҫын кӳлеҫҫӗ. Каторгалла ӗҫ ирхине тул ҫутӑласпа пуҫланса мӗн тӗттӗм пулаччченех пырать.

Хӗрлӗ воинсем нимӗҫ ирсӗрӗсене совет ҫыннисене ҫаратнӑшӑн, вӗлернӗшӗн, пусмӑрланӑшӑн пӗр шеллемесӗр тавӑраҫҫӗ. (ТАСС).

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВӐРҪӐ ОРДЕНӖ.

Пионерсен пулӑшӑвӗ

ВАРМАР. Тупахри туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем, отлично вӗреннипе пӗрлех, тӑван ҫӗршыва, фронта пулӑшас тӗлӗшпе те ӗҫлеҫҫӗ. Нумай пулмасть пионерсемпе шкул ачисем пӗр кун хушшинче 400 килограмм тимӗр-тӑмӑр, 54 килограмм эмел курӑкӗсем пухрӗҫ. Вӗренекенсем паха пӗлӳ илес, ӗҫлесе фронта пулӑшас тесе тӑрӑшаҫҫӗ.

Т. ИВАНОВА.
Пионерсен старши вожатӑйӗ.

Ҫуракинче пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

57. Сӗнтӗр районӗнчи **Я. М. Свердлов ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Д. П. Вязов** юлташ). Тӗштырӑ тата пӑрҫа-ясмӑк культурисене колхоз 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Агротехника тӗлӗшпе ҫуракине пысӑк пахалӑхпа туса ирттернӗ. Оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозсене пулӑшма колхоз планран ирттерсе 1 гектар акса хӑварнӑ. Акара ҫак сухаҫӑсем вӑрҫӑри пек ӗҫленӗ: **Т. П. Долгова, В. А. Блинова, Г. З. Тараканов** юлташсем, вӗсем кулленхи нормӑна яланах 145-шер процента ҫити тултарса пынӑ, сӳрелекенсем— **Н. Д. Вязов, О. И. Киселева** юлташсем кулленхи нормӑна 180-шар процента ҫити тултарса пынӑ.

58. Сӗнтӗр районӗнчи **С. М. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Я. А. Кольцов** юлташ). Колхоз тӗштырӑ тата пӑрҫа-ясмӑк культурисене 6 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозсене пулӑшма колхоз планран ирттерсе 1,5 гектар акса хӑварнӑ. Акара уйрӑмах **Р. Тодинов** юлташӑн бригади палӑрнӑ. Вӑл 5 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Сухаҫӑсем — **А. Спаскин, Анисимов** юлташсем вӑрҫӑри пек ӗҫленӗ. Вӗсем кулленхи нормӑна кунсеренех 150-шар процент тултарса пынӑ; тырӑ акакан **Павел Федоров** юлташ, 72 ҫулти колхозник, хӑйӗн ватӑлӑхне пӑхмасӑр, кулленхи нормӑна яланах 200 процент тултарса пынӑ; конюх **Андрей Иванов** лашасене пит те тӑрӑшса пӑхать, ҫавӑнпа та колхозри лашасем пурте лайӑх, мӑнтӑр, ҫуракинче маттур ӗҫленӗ.

59. Сӗнтӗр районӗнчи **«Ҫӗнӗ Юнга» колхоз** (колхоз председателӗ **Ф. А. Яндушкин** юлташ). Колхоз ҫуракине кӗске вӑхӑтра туса ирттернӗ. Оборона фондне хывма тата нимӗҫ оккупанчӗсенчен инкек курнӑ колхозниксене пулӑшма колхоз 4 гектар планран ирттерсе акса хӑварнӑ. Акара уйрӑмах **Виноградов** тата **Ванюшин** юлташсен бригадисем палӑрнӑ. Вӗсем 5 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Ҫаксем вӑрҫӑри пек ӗҫленӗ: сухаҫӑсем—**Матрена Комарова, Агафия Яндыкова, Калерия Илугина** юлташсем, вӗсем кулленхи нормӑна кашни кунах 160-шар процент тултарса пынӑ; тырӑ акакансем **А. Ванюшина, М. Шурнеева** юлташсем кулленхи нормӑна 160-шар процента ҫити тултарса пынӑ. Ҫак конюхсем питех те лайӑх ӗҫленӗ: **Н. Тепеев, Д. Ванюшин** юлташсем. Вӗсене пула колхозри лашасене лайӑх пӑхса усранӑ, ҫавӑнпа та акара пур лашасем те вӑйлӑн ӗҫленӗ, тӗрлӗ ҫитменлӗхсем пирки чарӑнса тӑни акара пачах та пулман.

60. **Мария Васильевна Толстова** — Ишлей МТС-ӗнчи трактористка, комсомолка. Вӑл, У—2 тракторпа ӗҫлесе, хӑйӗн планне майӑн 15-мӗш тӗлне 137 процент тултарнӑ, 66 килограмм горючи перекетленӗ.

61. **Кирилл Иванович Иванов**—Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. Вӑл У—2 тракторпа ӗҫлесе, ҫураки ӗҫӗсен планне майӑн 15-мӗш тӗлне 131 процент тултарнӑ, 39 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

62. **Клавдия Ефимовна Ефимова** — Ишлей МТС-ӗнчи трактористка. Вӑл СХТЗ тракторпа ӗҫлесе, ҫураки ӗҫӗсен планне майӑн 15-мӗш тӗлне 142 процент тултарнӑ, 101 килограмм горючи перекетленӗ.

63. **Петр Егорович Орлов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. Вӑл, СХТЗ тракторпа ӗҫлесе, ҫураки ӗҫӗсен планне майӑн 15-мӗш тӗлне 150 процент тултарнӑ, 68 килограмм горючи перекетленӗ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомне фронтран килнӗ телеграмма

Сирӗн телеграмма ҫине ответлесе, Армин Военнӑй Совечӗ боецсен, командирсен тата политработниксен ячӗпе партин Шупашкар хулинчи активне тата ӗҫҫыннисене красноармеецла хӗрӳллӗ салам ярать.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пысӑк вӑй-хӑват парса тӑракан ҫӑлкуҫӗсенчен пӗри— тылпа фронтӑн никам ҫӗмӗрейми ҫирӗп пӗрлӗхӗ пулса тӑрать. Сирӗн делегаци пирӗн патӑрта пулни Совет ҫӗршывӗн фрончӗпе тылӗ ҫирӗп пӗрлӗхлӗ пулнине тепӗр хут кӑтартса парать, тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫри пирӗн шанчӑка тата ытларах ҫирӗплетет. Хаяр тӑшмана хирӗҫ ҫӗнӗ те татӑклӑ ҫапӑҫусене тухма хатӗрленсе, эпир хамӑр вӑйсем ҫине шанса тӑратпӑр, йывӑрлӑхсем тем пек пысӑк пулсан та, тӑшман тем пек хытӑ хирӗҫ тӑрсан та, пирӗн Хӗрлӗ Ҫар совет ҫӗрне нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен ирӗке кӑларас задачӑна чыслӑн пурнӑҫа кӗртессине шанса тӑратпӑр.

Аслӑ Сталинӑн 1942 ҫулти майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ пире паттӑррӑн ҫапӑҫса ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарать, тӑшмана шанчӑклӑн ҫапмашкӑн хӗҫпӑшала тӗплӗн вӗренсе ҫитме хушать. Ҫак приказа пурнӑҫа кӗртетпӗр. 1942 ҫул—нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене пӗтӗмпех аркатса тӑкмалли ҫул пулса тӑрӗ. Нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫӗнтерессине пурнӑҫа кӗртмешкӗн Хӗрлӗ Ҫар валли мӗн кирлине йӑлтах ҫителӗклӗ парса тӑрас тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑн ӗҫлеме Сире ырӑ сунатпӑр.

Аслӑ Сталин сывӑ пултӑр! Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче кӗрешсе, фашистла захватчиксене аркатса тӑкма—малалла!

РОКОССОВСКИЙ, ЛОБАЧЕВ.

Хӗрлӗ Ҫар валли самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ ятлӑ звенине тӑвар!

Ишлей районӗн центрӗнчи комсомолкӑсемпе ҫамрӑк хӗрарӑмсен подразделенинчи осоавиахимовецсем Чӑваш республикинчи осоавиахимовецсене чӗнсе калани

Эпир нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн хаяр кунӗсенче пурӑнатпӑр. Пирӗн аттесем, пиччесемпе шӑллӑмсем — Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсемпе командирӗсем — ирсӗр фашистсене вӑйлӑн ҫапса аркатса пыраҫҫӗ, пирӗн ҫӗршывран хӑвалаҫҫӗ.

Фашистсем пире чурасем тӑвасшӑн, пирӗн хуласемпе ялсене пӗтерсе тӑкасшӑн тата пирӗн ҫӗршывӑн пуянлӑхне хӑйсен аллине илесшӗн. Вӗсем шкулсене ҫӗмӗреҫҫӗ, мирлӗ халӑха, ачасене, хӗрарӑмсене, стариксене вӗлереҫҫӗ. Совет ҫамрӑкӗсемшӗн фашизм чи ирсӗр тӑшман пулса тӑрать. Акӑ мӗншӗн эпир фронта мӗнпур вӑйпа пулӑшма тӑрӑшатпӑр. 1942 ҫула нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене пӗтӗмпех аркатса тӑкмалли ҫул туса хумалла.

Тӑшмана хирӗҫ кӗрешес ӗҫре осоавиахимовецсем малти ретсенче пымалла. Пирӗн аттесем тата пиччесемпе шӑллӑмсем фронтра нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене хирӗҫ кӗрешме мӗнпур вӑя панӑ пекех, эпир, тылри осоавиахимовецсем, нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене аркатса тӑкассине хӑвӑртлатма мӗнпур вӑя пама хатӗр.

Ҫар ӗҫне лайӑх тата отлично вӗренесси — совет ҫамрӑкӗсен чи пысӑк ӗҫӗ. Ҫар ӗҫне хӗрарӑмсен подразделенийӗсенче вӗренсе, эпир фашистсене хӑвӑртрах аркатса тӑкас ӗҫе хутшӑнма хатӗрленетпӗр, хамӑр укҫа-тенкӗпе моторсем нумайрах туса кӑларма пулӑшатпӑр.

Ҫак кунсенче Ишлей районӗн центрӗнчи комсомолкӑсемпе ҫамрӑк хӗрарӑмсен подразделенинчи осоавиахимовецсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума укҫа-тенкӗ пухас ыйтӑва пуҫарчӗҫ, ҫав звенона сталинла паттӑр авиаци парнелеме шутларӗҫ. Ҫав ӗҫ валли эпир 5 пин тенкӗ ытла пухрӑмӑр ӗнтӗ.

Орденлӑ Чӑваш республикинчи осоавиахимовецсем! Эпир сире пирӗн пек тума чӗнетпӗр. Пирӗн звено нимӗҫ мерзавецӗсене ним шеллемесӗр аркатса пытӑр. 1942 ҫулта нимӗҫсен фашистла войскисене пӗтӗмпех аркатса тӑкма Сталин юлташ панӑ приказа пурнӑҫа кӗртер!

Ишлей районӗн центрӗнчи хӗрарӑмсен подразделенинчи осоавиахимовецсем хушнипе алӑ пуснӑ:

Взвод командирӗ **Э. Кикас**, политрук **О. Захарова**, отделенисен командирӗсем: **З. Митрофанова, Т. Богомолова, Н. Варламова**, боецсем: **А. Башмакова, З. Кирьянова, Т. Павлова, В. Сергеева.**

Республика тĕштырăсем акас плана иртттерсе тултарчĕ

Кăçалхи июнĕн 1-мĕш тĕлне республикăри колхозсем çурхи культурăсене 335220 гектар акса хăварса плана 93,4 процент тултарчĕç. Тĕштырăсемпе пăрçа-ясмăк культурисене акса хăварас плана республика 103,5 процент тултарчĕ. Пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне плана 97 процент тултарнă пулнă. Республикăри 14 район кăçалхи çураки ĕçĕсене вĕçлерĕç.

Çурхи пĕтĕм ĕçсен планне тултарас тĕлĕшпе Çĕмĕрле, Канаш, Калинински, Сĕнтĕр, Красноармейски, Советски, Шăхасан тата ытти районсем малта пыраççĕ. Çак районсем çураки планне 102 процентран пуçласа 106 процент таран тултарнă.

Малтанхи пекех, çураки ĕçĕсенче Пăрачкав, Шăмăршă, Первомайски, Улатăр районĕсем юлса пыраççĕ. Çак районсенче колхозсен туртăм вăйĕпе тата тракторсемпе туллин усă курмаççĕ, колхозниксем хире хĕвелпе пĕрле тухса хĕвел аниччен ĕçлессине ку районсенче организацилемен.

Çĕрулми лартас плана республика 79 процент пурнăçларĕ. Ку ĕçре Вăрнар, Комсомольски, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски районсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем плана ытлашшипех тултарнă. Елчĕк районĕнче (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Волков, райсовет исполкомĕн председателĕ Тимофеев) çĕрулми лартас ĕç тӳсме çук кая юлса пырĕ, кунта июнĕн 1-мĕш тĕлне плана пĕтĕмпе те 9 процент ытларах çеç тултарнă.

Çураки ĕçĕсене чăсса пыма нимĕнле сăлтавсем те пулма пултараймаççĕ. Партипе совет организацисен, МТС-семпе колхоз руководителĕсен, çурхи уйхир ĕçĕсене çак кунсенчех вĕçлесе, пĕтĕм ĕç вăйне çум çумлас, çĕртме тăвас, тислĕк кăларас тата утă пухса кĕме хатĕрленес ĕçе мобилизацилемелле.

Çĕмĕрле районĕ çураки планне 105 процент тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 3-мĕш. (Хамăр корр.). Ĕнер районра колхоз председателĕсен тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура колхозсенчи малта пыракан бригадăсен бригадирĕсемпе стахановецсем те пулчĕç. Канашлу ялхуçалăх çулĕнчи малтанхи ĕçсен итогĕсене пăхса тухрĕ тата малашнехи задачăсене сӳтсе-яврĕ.

Районри колхозсем кăçалхи çуракине иртнĕ çулхинчен начар мар туса ирттерчĕç. Чылай колхозсем çуртырăписене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç. Çакă вăл районри нумай колхозсем çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнинчен килчĕ. Ытти çулсенче ялхуçалăх инвентарĕсем çитменни е юсавсăр пулни çуракинче чăрмав пулса тăнă пулсан, кăçал ун пек тĕслĕхсем пачах пулмарĕç. Çуракине районри колхозсем майăн 2-мĕшĕнче массăллăн пуçăнчĕç. Вăл 8 кун хушши пынă. Çак вăхăт хушшинче районри колхозсем пурĕ 6580 гектар сухаласа акнă, тĕштырăсем акас плана 102 процент тултарнă. «Ĕçĕн ăнăçлăхне иртнĕ çулхипе танлаштарса пăхсан, кăçал пирĕн районри колхозсем чылай лайăхрах, тимлĕнрех ĕçлени курăнать. Иртнĕ çул çак вăхăтра тĕштырăсем акас плана район мĕн пурĕ те 50 процент кăна тултарнăччĕ», — тет докладчик Котлеев юлташ.

Уйрăм колхозсем кăçал ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн, пысăк хастарлăхпа туса пыраççĕ. Турханти «Комбинат» колхоз (председателĕ Кузьмин юлташ), Мăнçăмкинерри «Молодая сила» (председателĕ Кириллов юлташ), Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красноармеец» тата ытти чылай колхозсем çуракине кĕске срокра ăнăçлăн турĕç. Район çурхи ĕçсен планне июнĕн 2-мĕш тĕлне 105 процент ытла пурнăçларĕ. Планран ирттерсе 174 гектар тĕштырă акса хăварчĕ.

Анчах та районри уйрăм колхозсенче çураки кăлтăксемсĕр иртмерĕ. Кăмаша, Магарино ялсовечĕсенчи колхозсем уйрăмах кая юлса пычĕç. «Красный пахарь» колхозра ĕç дисциплини япăх пулни курăнчĕ. Кунта колхозниксем ĕçе ирхине 8—9 сехетре çеç тухса, ĕçрен 6—7 сехетрех кĕрсе çуракине вăрăма чăсрĕç. Район пахча-çимĕçсем лартас тĕлĕшпе кая юлса пырать, плана пурĕ те 20 процент çеç пурнăçланă.

Канашлура 10 çын тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен ĕç опычĕсене каласа парĕç, ĕçри çитменлĕхсене паллă турĕç.

— Пирĕн колхоз кăçал çурхи тырăсене 1008 гектар акса хăварчĕ. Пур йышши тырăсене те планпа пăхнинчен ытларах акса хăвартăмăр. План тăрăх тулă 300 гектар çине акмалла, эпир 310 гектар акрăмăр, сĕлĕ 235 гектар акмалла, эпир 275 гектар акрăмăр. Пирĕн колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Халĕ 55 гектар çинчи тырра çумкурăксенчен тасатрăмăр, — тет «Красноармеец» колхоз председателĕ Долгов юлташ.

Ялхуçалăх ĕçĕнчи актив канашлура малашнехи задачăсене палăртрĕ. Районри колхозсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнма, ăмăртура пĕрремĕш вырăна йышăнассишĕн большевикла кĕрешме чĕнчĕ.

„Майăн 1-мĕш“ колхоз Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ

ШĂХАСАН, июнĕн 3-мĕш. (Хамăр корр.). Ямбахри «Майăн 1-мĕш» колхоз членĕсем «Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем Совет Союзĕнчи колхозсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине сӳтсе-яврĕç. Вĕсен пуçаравне кашни колхозникпа колхозница чĕререн ырласа йышăнать.

Колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйĕн çине пысăк обязательствăсем илчĕ. Тĕштырăсене 16 кун хушшинче пухса кĕме, государствăна тĕштырă парас обязательствăна срокчен, июнĕн 20-мĕш тĕлне, пĕтĕмпех пурнăçлама, план тăрăх 80 пăт илес вырăнне кашни гектартан 100-шер пăт ытла тĕштырă, 120 центнер çĕрулми туса илме пулчĕ.

Кунсăр пуçне колхоз ирхи çĕртме сухине июнĕн 5-мĕш тĕлне вĕçлеме, кĕрхи çĕртме сухине октябрĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтерме пулчĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва кашни колхозникпа колхозница хутшăнать. Вĕсем çĕршывпа фронта вăйлăн пулăшас майпа кулленхи ĕç нормине кашниех 120—150 процентран кая мар тултарса пыма сăмах пачĕç.

Халĕ колхоз çĕртме сухи тăвать. Герасимова, Иванова, Клементьева колхозницăсем ĕç нормине 200 процента яхăн пурнăçласа пыраççĕ.

С. ШАДИН.

Государствăна 1942 çулшăн тырă параççĕ

Районĕпе 1150 центнер

КАЛИНИНО, июнĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Государствăна кăçалхи çулшăн тырă парас обязательствăна срокчен пурнăçлас ĕçе районри пур колхозсем те хутшăнчĕç. Паянхи куна Заготзерно пунктне пурĕ 1150 центнер тĕштырă леçнĕ. Аçăмçырмари «Коминтерн» колхоз 93 центнер, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 130 центнер, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз 100 центнер тĕштырă леçсе панă.

И. МУРЗУКОВ,
Наркомзагăн Калинински районри уполномоченнăйĕ.

* * *

ИШЛЕИ, июнĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Сыбайкасси ялсоветĕнчи «Труд» колхоз 1942 çулти обязательство шучĕпе государствăна срокчен 33 центнер тĕштырă пачĕ. «Вускасси» колхоз 20 центнер çĕрулми тата Мамăш ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз 12 центнер ыраш пачĕç.

П. ЛУКИН.

Хĕрлĕ обозсем организацилер

КУКЕÇ, июнĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна 1942 çулшăн тырă пама хатĕрленеççĕ. Апаш ялсоветĕнчи «Крахмал», «Урожай» колхозсем çак кунсенче 1942 çулхи обязательство шучĕпе государствăна 40-шер центнер тырă леçсе пачĕç. Çавăн пекех Байзубаково, Шăнкас, Иккасси, Шурка ялсовечĕсенчи колхозсем те Заготзерно пунктне тырă леçрĕç.

«Крахмал» колхозра государствăна тырă леçсе парас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксем хĕрлĕ обоз организациленĕ. Пĕр кун хушшинче колхоз пĕр тонна та 400 килограмм тырă леçсе панă. Вĕсен пуçаравне ытти колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем те малалла сарма тивĕç.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăйлă тырпул туса илме тăрăшаççĕ

ИШЛЕИ. Чантăр ялсоветне кĕрекен «Красный Флот» колхоз çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕ. Колхозниксем кăçал уйрăмах тырăсене лайăх пăхса ӳстерессишĕн çине тăрсах ĕçлеме тытăнчĕç. Çак кунсенче вĕсем 7 гектар çинчи ыраш калчисене тислĕк шывĕпе шăварчĕç. Çĕртме сухине кĕске срокрах туса пĕтерчĕç.

Çавăн пекех ялсоветĕнчи «Волгарь» колхоз та çĕртме сухине ăнăçлăн туса çитерчĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Колхоз тырă вырма хатĕрленет

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕ. Тырăсене акса пĕтернĕ хыççăн колхозниксем хăйсен пахчисенче çĕрулми тата пахча-çимĕçсем лартрĕç.

Халĕ колхозниксем тип-тикĕс тата çăра ӳсекен тырпула вăхăтра пуçтарса кĕме хатĕрленме тытăнчĕç. Çурласене тата савасене туптаттарма тытăнчĕç, жнейкăсене тата урапа тавраşсене юсаççĕ. Бригадăсем итемсене улăмсенчен тасатаççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Англи бомбардировщикĕсем Рур облаçĕ çине вăйлăн пырса тапăннă

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çыранри авиацин пин ытла самолечĕ Хĕвеланăç Германи çине массăллăн вĕçсе кайса тапăннă. Вĕсем пуринчен ытла Рур облаçĕнчи çар промышленноçĕн центрĕсене, уйрăмăнах Эссена тапăннă.

Самолетсен командирĕсем малтанлăха панă отчетсем тăрăх, çак тапăну питех те ăнăçлăн пулса иртнĕ.

Рур облаçне тапăннипе пĕр вăхăтрах бомбардировщиксен, истребительсен, çыранри тата çар авиацийĕн самолечĕсем противникăн Германири, Францири тата Голландири аэродромĕсене аталанă.

Çак мĕнпур операцисенчен Англин 35 самолечĕ каялла таврăнайман.

Июнĕн 1-мĕшĕнче кăçхине Англи истребителĕсем Флиссинегри тата Калери çар объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Англи авиацийĕ Германин промышленноçлă центрĕсене хăватлăн пырса çапни

Англи пичечĕ Англи авиацийĕ Кельн çине вĕçсе кайса тапăнни çинчен

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Англи пичечĕ Англи бомбардировщикĕсем Кельн çине вĕçсе кайса тапăнни çинчен нумай çырать. Çав операци вăл Германи çине сывлăшран вăйлă наступлени тăвассин пуçламĕшĕ кăна пулса тăнине уйрăмăнах палăртса çыраççĕ.

«Дейли телеграф инд морнинг пост» хаçат Кельн çине вĕçсе кайса тапăннă ĕçĕн пысăкĕшне паллă туса çапла çырать: «Германия ытти çĕршывсене вăрçă хăрушлăхне тӳстерни—пĕрремĕш хут кăна пулнă ĕç мар, вăл темиçе хутчен те пулса иртнĕ, анчах çак çĕр çул ытла хушăра нимĕçсем хăйсен территорийĕ çинче пĕрремĕш хут кăна-ха вăрçă мĕн иккенне курса тӳсеççĕ. «Хĕç çĕклекен—хĕçренех пĕтет» текен сăмахсене пур халăхсем те, пуринчен те ытларах нимĕçсем, лайăххăн ăнланса иличчен, çĕр çинче нумай вăхăтлăх мир пулас çук».

«Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «паянтан пуçласа нимĕçсем пурăнакан кашни хуларах, Эмденран пуçласа Бреславль таран, Балти тинĕсĕнчен пуçласа Констанца таран, унти çынсем пĕлĕт çине шикленсе пăхĕç, каç пулса çитсен: «Паян кама черет-ши пĕтме?» тесе шăппăн калаçĕç».

«Дейли экспресс» хаçат, Англи авиацийĕ Рейн облаçĕ çине вĕçсе кайса тапăннине сывлăшри пысăк операци вырăнне хурса çапла çырать: «Ку вăл нумай пулмасть Черчилль каланă наступленин пуçламĕшĕ кăна-ха»,—тет. Малалла хаçат çапла çырать: «Инçетри фронтсенче çапăçакан салтаксем патне, Рейн облаçĕнче çуралса ӳснисем патне, вĕсен облаçне çавтери вăйлăн пырса çапни çинчен калакан хыпар çитсен, вĕсен чĕрисене хăратса чĕтретекен шухăш ярса илĕ»,—тет.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Июнĕн 2-мĕшĕнче Англин премьер-министрĕ Черчилль общинăсен палатинче Ливири ĕçсем çинчен тухса каланă. Черчилль Ливире хальхи вăхăтра пулса пыракан çапăçусем çинчен генерал Окинлек çырса панă доклада вуласа панă.

Майăн 26-мĕшĕнче генерал Роммель Германин корпусне наступление янă. Тытса илнĕ документсенчен çакă курăнать: çав наступленин тĕллевĕ вăл—Англин бронетанковăй войскисене аркатса тăкса Тобрука тытса илесси пулса тăрать. Хăйĕн докладĕнче генерал Окинлек Ливири çапăçусем мĕнле пыни çинчен тĕплĕн çырса кăтартать.

Англин вăйĕсем унта пысăк çитĕнӳсем тунă тесе калама пысăк сăлтавсем пур.

Хаяр çапăçусем халĕ те пыраççĕ-ха, çапăçу вĕçленмен-ха. Малашне те йывăр çапăçусем пулĕç тесе калама пулать. Анчах вĕсен результачĕ кирек мĕнле пулсан та, Роммель генералăн малтанхи наступленин планĕсем пĕтĕмпех арканса кайрĕç, ĕçĕ çапла ăнăçманни ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тутарчĕ.

Çывхартса анчах шутланă тăрăх, противникăн 260 танкне яхăн тата автомашинисене нумай пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ.

— Паллах ĕнтĕ,—тенĕ Черчилль,—çапăçу мĕнле пынипе савăнма пирĕн сăлтав çителĕклех пур. Çапăçусем малалла мĕнле пулса пынине эпир тимлĕн асăрхаса тăрăпăр.

Малалла Черчилль çапла каланă: «Эпĕ Англин сывлăш-çар вăйĕсем майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кельн çине питĕ те вăйлăн пырса тапăнни çинчен каламасăр ирттерсе яма пултараймастăп. Мастерлăхăн, хăюллăхăн тата тимлĕхĕн çак çĕнтерĕвĕнче ĕлĕкрех пулса иртнĕ çĕрлехи бомбардировкăсен пур рекорчĕсенчен те икĕ хут ытла ирттерсе янă. Çак тапăнăва Англин самолечĕсем пин самолетран кая мар хутшăннă, вĕсене Англи летчикĕсем ертсе пынă. Тапăну аркатса тăкмаллах вăйлă пулнă, анчах тапăннă объектсен фотографийĕсене халиччен те ӳкерсе илеймен-ха, мĕншĕн тесен бомбардировка тунă района пĕтĕмпех тĕтĕм хупăрласа илнĕ.

Иртнĕ çĕрле Англин сывлăш-çар вăйĕсен 1.036 самолечĕ Европа континенчĕ çине вĕçсе кайса килнĕ, пур самолетсем те тенĕ пекех Эссен районĕнче вĕçнĕ. Çак тапăну çинчен малтан илнĕ сведенисем тăрăх, тапăннă районра питĕ нумай пушар тухнă. Çак иккĕмĕш тапăнуран пирĕн 35 бомбардировщик каялла таврăнман.

Анчах эсир çитес вăхăтсенче пирĕн пур тапăнусенче те самолетсем 4 цифраллă числопа шутланмалла чухлĕ пулĕç тесе ан шухăшлăр. Тапăнусен меточĕсем, условисене кура, ялан улшăнса пырĕç. Тепĕр енчен илсе каласан, çак çĕрлехи икĕ пысăк тапăну—Англия Германие хирĕç сывлăшран тапăнассин çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине кăтартса тăраççĕ. Пирĕн вăйсем çумне Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăш-çар вăйĕсем хутшăнсан (вĕсем часах хутшăнмалла), çак наступленин анлăшĕ палăрмаллах ӳссе пырĕ.

Эпĕ çапла калама пултаратăп: çак çулталăк хушшинче Германин мĕнпур хулисем, порчĕсем тата çар промышленноçĕн центрĕсем халиччен пĕр çĕршыв та тӳссе курман асапсем, вăраха пыракан, питĕ анлă тата йывăр асапсем тӳссе ирттерĕç».

Рузвельт конгреса янă послани

ВАШИНГТОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рузвельт конгреса послани янă. Çав посланире вăл çапла каланă: «Болгари, Венгри тата Румыни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерчĕç. Çак виçĕ государствăн правительствисем çакнашкал ĕçе хăйсен пуçарулăхĕпе мар, хăйсен халăхĕсем вăрçас тенипе те мар, вĕсем ăна хăйсем Гитлер аллинче тăнипе, вăл хушнă тăрăх çеç çапла тунине эпĕ ăнланатăп. Хальхи вăхăтра çак виçĕ çĕршыв пирĕн пĕрлешнĕ государствăсене хирĕç вăрçă ĕçĕсене туса тăраççĕ тата çакăнпа пĕрлех вĕсем çак вăрçă ĕçĕсене ытларах сарса яма шухăшлаççĕ. Çавăнпа та эпĕ конгреса Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Болгарипе, Венгрипе тата Румынипе вăрçăллă тăраççĕ тесе шутлама сĕнетĕп».

Мексика тĕнĕл держависене хирĕç вăрçа тухнă

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, президент Авила Камачо Мексика Германие, Италие тата Японие хирĕç вăрçа тухасси çинчен пĕлтерекен деклараци алă пуснă.

Нимĕçсем Англи авиацийĕ вăйлăн тапăннинчен хăраса ӳкнĕ

Гиммлера сывлăшран тапăннинчен хӳтĕлессин верховнăй контролерĕ туса хунă

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ пĕлтернĕ тăрăх, гестапо начальникне Гиммлера Германи çине сывлăшран тапăннинчен хӳтĕлессин пĕтĕм службине пăхса тăракан верховнăй контролер туса хунă.

Гиммлера çак ĕçе лартни çинчен калакан пĕлтерĕве Англин пин самолечĕ Кельн çине тапăннă хыççăн темиçе сехет иртсенех пичетлесе кăларнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ калани

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ генерал-лейтенант Арнольд вăрçă ĕçĕсем пирки Англие пынă. Унта вăл çапла каланă: «Америка самолечĕсем Англи самолечĕсемпе пĕрле вĕçсе çӳрĕç, анчах Великобританире вĕсен хăйсене уйрăм аэродромсем пулаççĕ.

Пулас çапăçусенче эпир хамăрăн боевой самолетсемпе пуринпе те туллин усă курма хатĕр тăратпăр. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вăрçă ĕçĕсене вĕрентме кирлĕ шутран ытлашши пĕр боевой самолет та хăвармастпăр. Черчилль тата президент Рузвельт хамăр халăхсене пĕрре çеç мар çапла каласа шантарнă: эпир противника унăн çар хăвачĕ хавшаса çитичченех пĕр хĕрхенмесĕр çапа-çапа амантăпăр. Англи авиацийĕ Кельн çине вĕçсе кайса тапăнни чаплă операци пулса тăчĕ. Америка летчикĕсем Германи çине кашни каç вĕçсе кайса тапăнас ĕçе мĕн чухлĕ часрах хутшăнĕç, сывлăшри вăрçăн вăйне Германия çавăн чухлĕ хăвăртрах туйма пуçлĕ, тетĕп эпĕ».

«Америкăн генеральнăй штаб начальникĕ генерал Маршалл нумай пулмасть Америка войскисем Франци çĕрĕ çине анĕç тесе пĕлтерчĕ, — тенĕ малалла Арнольд. — Каламасăрах паллă, гитлеровецсем оккупациленĕ Европа çине наступлени тума сывлăшра пуç пулса тăни кирлĕ, эпир çакна тума шухăшлатпăр. Пирĕн кĕске вăхăт хушшинчех пысăк ĕçсем тумалла.

Пирĕн сывлăшри çар вăйĕсем противник çине сывлăшран наступлени тăвас ĕçе хутшăнмалла, эпĕ Англие килни çав кунсене часрах çитме май парĕ тесе шутлатăп», — тенĕ Арнольд.

Гейдриха вĕлерме тапăннă пирки Германире массăллăн арестлеççĕ

НЬЮ-ИОРК, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германире ĕлĕк «Хурçă шлем» организацинче тăнă членсене нумай арестленĕ. Ку арестсене Гейдриха вĕлерме тапăннă пирки туса ирттернĕ.

Германи самолечĕ Швеци территорийĕ çийĕнче вĕçнĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: зенитнăй артиллери Эльвкарлеори (Упсальски провинци) металлурги завочĕсем тĕлĕнче вĕçсе пыракан нимĕçсен курьерски самолетне пенĕ. Пенĕ хыççăн самолет хăйĕн çулне улăштарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Тимĕрçĕ цехĕнче

КАНАШ. (Хамăр корр.) Вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма, кивĕ детальсемпе усă курма, горючине тата электроэнергие перекетлеме пулнă. Халĕ цех коллективĕ çав обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешет. Коллектив производствăн графикне кулленех ăнăçлăн тултарса пырать. Уйрăмах, опытлă тимĕрçĕсем тухăçлăн ĕçлеççĕ. Акă, Миронов, Галкин, Самойлов юлташсем нормăна кашни сменăрах 250-шер процент, Веть, Дюжев юлташсем 300-шер процент тултараççĕ.

Уйрăм рабочисем хушшинчи ăмăртура, яланхи пекех, стахановец Федин юлташ малта пырать. Унăн паян тунă ĕçпе лăпланса ларас йăла çук, вăл ыран тата лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшать. Нумай пулмасть вăл пĕрремĕш номерлĕ детальсене туса кăларас ĕçе хăвăртлатмалли май тупнă. Çавăн хыççăн Федин юлташ хăйне панă заданисене пĕрмаях 300 процент ытла тултарма пуçларĕ.

Ку цехра тимĕрçĕсемпе пĕрле прессовщиксем ĕçлеççĕ. Вĕсем те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура хăйсен ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç. Сăмахран, Черкаспа Самилин юлташсем кашни сменăрах 3-шер норма, Лашманов юлташ 4 норма тултаракан пулчĕç.

Рабочисене тухăçлăн ĕçлеме вĕсен ăмăрту итогĕсене кулленех туса пыни пулăшать, — тет цех начальникĕ коммунист Бойко юлташ.—Паян мала тухнă рабочи ыран та çав вырăнтах юлассишĕн кĕрешет, каярах юлни ăна хăваласа çитсе унпа танлашма тăрăшать.

Цехра рабочисене тепĕр профессие, хĕрарăмсене паровой мăлатукпа ĕçлеме вĕрентеççĕ. ВКП(б) членĕ, прессовщик Козлов юлташ молотобоец пулса ăнăçлăн ĕçлет, хĕрарăмсенчен Панфиловăпа Никитина юлташсем паровой мăлатук машинисчĕн ĕçне лайăх вĕренсе çитрĕ. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Мастерсемпе малта пыракан рабочисем ĕçри йĕркелĕхпе тасалăхшăн кĕрешӳ пуçарса янă. Вĕсен пуçаравĕпе, иртнĕ канмалли кунсенче цехри тимĕр-тăмăрсене, çӳп-çапсене тасатас тĕлĕшпе воскресниксем туса ирттернĕ. Рабочисем хăйсен ĕç вырăнĕсемпе станокĕсене мĕнле тытнине мастерсем пăхсах тăраççĕ.

Вăрман ытларах хатĕрлессишĕн

ИЕПРЕÇ. Леспромхоз коллективĕ вăрман ĕçĕсен 6 уйăхри планне хатĕрлес енĕпе 90 процент, турттарас енĕпе 56 процент тултарнă. Турттарас ĕç хатĕрлессинчен юлса пырать. Çак çитменлĕхе пĕтерес тата иккĕмĕш квартал планне ăнăçлăн тултарас тесе, коллектив Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем ĕç тухăçлăхне хăпартма, оборудованисемпе туллин усă курма, техникăлла вĕренĕве организацилеме пулчĕç. Кусемсĕр пуçне коллектив çурçулти ĕç планне июнь уйăхĕнче тултарма тата çĕршывпа фронта кирлĕ йывăç материалсене задани панă чухлех туса кăларма обязательство илчĕ.

Леспромхоз хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех механизацилесе çитернĕ. Йывăççене татас, çурас, якатас ĕçсене электричество вăйĕпе тăваççĕ. Йывăртарах та ответлăрах ĕçсенче опытлă рабочисем ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕç пахалăхĕ те лайăх, тухăçлăхĕ те пысăк. Акă, В. Кубасов, А. Тютяев, М. Сюсин, В. Пилясов тата Мартынов юлташсем çуна-урапа тăвас тĕлĕшпе панă заданисене 200 процент тултараççĕ. Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, вĕсем тата тухăçлăрах, тата лайăхрах ĕçлеме сăмах параççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Чувашскому тресту «Росглавхлеб»
требуются: главный бухгалтер, нормировщик, товаровед и зав. складом.
Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6. Тел. № 7—93.

Чебоксарской конторе НК Связи
требуются на работу: доставщики телеграмм, сопровождающие почту, сортировщики, почтальоны и ученики.
Обращаться по адресу: Дом связи, II-й этаж, отдел кадров. Телеф. 2—74.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НКЗ СССР
объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год
на первый курс агрономического и зоотехнического факультетов. Институт готовит специалистов высшей квалификации по сельскому хозяйству—агрономов и зоотехников. Окончившие институт специалисты направляются на работу НКЗемом СССР.
В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.
Заявления о приеме подаются на имя директора по адресу: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Калинина, № 34.
К заявлению прилагаются следующие документы:
1. Автобиография.
2. Аттестат об окончании средней школы (в подлиннике).
3. Паспорт (пред'являеся лично).
4. Три фотокарточки.
5. Справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).
Учащиеся, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 гг. на «отлично» и «хорошо», принимаются в институт без испытаний.
При наличии к концу приема свободных вакансий без испытаний принимаются все окончившие средние школы в 1941 и 1942 гг.
Лица, поступающие в институт с испытаниями, держат таковые по: 1) русскому языку и литературе, 2) физике и 3) химии.
Заявления о поступлении в институт принимаются до 1 августа 1942 года.
Срок обучения в институте 3 года.
Отличники средней школы, лица, сдавшие два приемных испытания на «отлично» и одно не ниже «хорошо» и студенты, получившие на экзаменационной сессии в институте 2/3 оценок «отлично» и 1/3 «хорошо», а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, получают стипендию.
Особо нуждающиеся стипендиаты, а также дети пенсионеров и военнослужащих рядового и младшего начальствующего состава, а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, освобождаются от платы за обучение.
Учебники и учебные пособия предоставляются всем студентам бесплатно из библиотеки института.
При институте имеется студенческое общежитие с постельными принадлежностями и закрытая студенческая столовая.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 6—23.

НТ 159 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: н